# Митта Ваçлейĕн «Атăл юрри» сăвви

**Воронова Вера Николаевна,**

*Елчĕк муниципалитечĕн Курнавăшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен*

***Урок тĕсĕ:*** *сăвва илемлĕ вулама вĕренмелли урок*

***Пĕлӳ тĕллевĕ:*** *Митта Ваçлейĕн «Атăл юрри» сăввине хавассăн, кăмăла çĕклентерсе, палăртуллă вулама вĕрентесси.*

***Аталантару тĕллевĕ:*** *сăввăн тĕп шухăшне палăртасси, ачасен шухăшлавне аталантарасси.*

***Сапăрлăх тĕллевĕ:*** *тăван тавралăх илемне курма, ăна упрама кирлине палăртасси.*

***Урок мелĕсемпе меслечĕсем:*** *ыйту-хурав, учитель сăмахĕ, вулав, ӳкерчĕк тăрăх каласа парасси, карттă тăрăх Атăла тупасси, слайдсемпе ĕçлесси.*

***Словарь ĕçĕ:*** *чатăр, ăрша, сĕм çĕрле.*

***Урокра кирлĕ хатĕрсем:*** *«Митта Ваçлейĕ» презентаци, Атăла сăнлакан сăн ӳкерчĕксем, Европа картти тата Чăваш Республикин картти*

***Урок эпиграфĕ:***

*Мăн Атăл-*
*Çĕр-шывăмăр пуянлăхĕ,*
*Мăн Атăл-*
*Ĕçре улăп евĕр ĕçчен,*
*Мăн Атăл,*
*Эс çывăх пире ĕмĕртен.*

*Петр Градов*

## *Урок юхăмĕ*

1. ***Класа йĕркелени.***
2. ***Çĕнĕ тема. Митта Ваçлейĕн «Атăл юрри» сăвви.***

*1) Митта Ваçлейĕ çинчен Геннадий Волков çырнипе паллашасси. «Митта Ваçлейĕ хăйне евĕр сăвăç, хăйне евĕр шухăшлавçă пулнă. Вăл сăвă çыракан мар, вăл чăн-чăн сăвăç, чăваш юнлă, Çеçпĕл чунлĕ поэт пулнă. Сăвă унăн ĕçĕ мар, унăн сывлăшĕ, унăн пурнăçĕ, унăн чĕре таппи пулнă..».*

*2) Митта Ваçлейĕн портретне кăтартасси, унăн биографине слайдсемпе усă курса каласа парасси.*

**3. Атăл юхан шыв çинчен ӳкернĕ картинăсемпе паллашасси.**

***4.**Атăл ăçта вырнаçнине карттă çинче тупасси, унăн сарлакăшне, тарăнăшне каласси. Атăл хĕрринче мĕнле хуласем пуррине пĕлесси.*

***5.«Атăл юрри» сăвва пăхмасăр, сасса кирлĕ пек улăштарса вуласси***

*Ачаш ача пек / Атăл ирхине://*
*Ăш çил вĕрет,/ вăл тутлăн анаслать… //*
*Вăран,/ юлташ,уç чатăр аркине,//*
*Мал ен сана хавассăн саламлать!//*
*Ку çаврана хавассăн, кăшкăрмасăр, пысăках мар чарăнусем туса, çав вăхăтрах кашни йĕрке хыççăн пысăк чарăнусем туса вуламалла.*

*Ĕçри ĕçчен пек/ Атăл кăнтăрла://*
*Вылять ун çийĕн/ тĕтĕм те ăрша…//*
*Кунта/ мухтавлă тинĕс пулмалла,//*
*Эппин,/ ĕçлер-и,/ тусăм,/ тăрăшса!//*
*Иккĕмĕш çаврана мăнаçлă сасăпа, хавхаланса, тăваттăмĕш йĕркине кăшкăрса вуламалла.*

*Пуса каччи пек/ Атăл каçхине: //*
*Юрлать,/ ташлать,/ кăшт хĕрĕнкĕ курнать…//*
*Мĕн пулчĕ,/ тусăм,/ санăн киммӳне, //*
*Çут уйăх çумĕнчен/ ма пăрăнать?//*
*Виççĕмĕш çаврине хавассăн, ыйтуллăн вуламалла.*

*Çулри юлташ пек/ Атăл сĕм çĕрле://*
*Инçе-инçе/ чĕнеççĕ çутисем…//*
*Çитер,/юлташ,/пĕр тухнă çĕрелле, //*
*Эпир-/ пулас Мăн тинĕс хуçисем! //*
*Юлашки çаврине васкамасăр, мăнаçлăн вуламалла.*

***6.Сăвва иккĕмĕш хут вуласси.***

*1) Сăввăн темипе тĕп шухăшне палăртасси.*

*2) Сăвва ачасене пурне те пĕрле хорпа вулаттарасси.*

*3) Ыйтусене хуравласси:*

- *«Атăл юрри» сăвăра Митта Ваçлейĕ мĕн çинчен çырнă?*
- *Ирхи, кăнтăрлахи, каçхинехи, сĕм çĕрлехи Атăла автор мĕнле сăнлать?*
- *Сăвă сире килĕшрĕ-и? Ытларах мĕнле сăнлăх асра юлчĕ?*
- *Сирĕн чунăрта сăвă еплерех кăмăл - туйăм çĕклерĕ?*

***7.Словарь ĕçĕ:***

*Чатăр - чаршав, пысăк чаршав пек карса хунă япаланах пĕлтерет.*

*Ăрша - тĕтре вĕлтĕртетсе тăни.*

*Сĕм çĕрле - çĕрĕн варри.*

***8.Автор тунă сăнара куç умне кăларасси.***

*1) Сăвва пайăн-пайăн вуласа тишкересси:*

- *Мĕншĕн пĕрремĕш çаврара Атăла ачаш ачапа танлаштарнă?*
- *Кăнтăрлахи Атăл еплерех курăнать?*
- *Каçхинехи Атăла мĕншĕн пуса каччипе танлаштарать?*
- *Тăваттăмĕш çаврара сăмах мĕн çинчен пырать?*

*2) Сăввăн тытăмĕпе ĕçлесси:*

*Сăвăра миçе çавра? Çаврара миçе йĕрке? (Ку сăвă тăватă çаврараn, кашни çаври тăватă йĕркерен тăрать. Сăвă йĕркисенчи сăмахсем пĕр пек янраса вĕçленеççĕ).*

*3) Сăввăн содержанийĕ тăрăх цитатăллă план çырасси:*

*-Атăл ирхине*

*-Ирхи çил*

*-Тавралăх*

*-Атăл кăнтăрла*

*-Атăл каçхине*

*-Атăл сĕм çĕрле.*

***9.Ушкăнпа ĕçлени.***

*1) Кашни çаврари ĕç-пуç мĕнле сăнлăхсем урлă йĕркеленсе пынине таблицăпа кăтартса пани:*

| *Çаврасем* | *Япала ячĕ* | *Паллă ячĕ* | *Глагол* |
|---|---|---|---|
| *1-мĕш çавра* | *ача, Атăл, ирхине, çил, юлташ, чатăр, арки, ен* | *ачаш, ăш, хавассăн* | *лăпкать, анаслать, вăран,саламлать* |
| *2-мĕш çавра* | *ĕçчен, Атăл, тĕтĕм, ăрша, тинĕс, тусăм* | *ĕçчен, мухтавлă* | *вылять, пулмалла, тăрăшса* |
| *3-мĕш çавра* | *каччи, Атăл, тусăм, киммўне, уйăх, çулĕнчен* | *хĕрĕнкĕ, çут* | *юрлать,ташлать, курăнать, пăрăнать* |
| *4-мĕш çавра* | *çулри, юлташ, Атăл, çĕрле, çутисем, юлташ, тинĕс, хуçисем* | *сĕм, инçе-инçе, мăн* | *чĕнеççĕ, çитер,тухнă* |

*2) Митта Ваçлейĕн «Атăл юрри» сăввине Н. А. Некрасовăн «На Волге» сăввипе танлаштарасси:*

*О Волга!.. колыбель моя!*
*Любил ли кто тебя, как я?*
*Один, по утренним зарям,*
*Когда еще все в мире спит*
*И алый блеск едва скользит*
*По темно-голубым волнам,*
*Я убегал к родной реке.*
*Иду на помощь к рыбакам,*
*Катаюсь с ними в челноке,*
*Брожу с ружьем по островам.*
*То, как играющий зверок.*
*С высокой кручи на песок*
*Скачусь, то берегом реки*
*Бегу, бросая камешки,*
*И песню громкую пою*
*Про удаль раннюю мою…*
*Тогда я думать был готов,*
*Что не уйду я никогда*
*С песчаных этих берегов.*
*И не ушел бы никуда-*

*Когда б, о Волга! Над тобой*

*Не раздавался этот вой!*

*3) Сăвăри илемлĕх мелĕсене тупса палăртасси:*

*«Ачаш ача пек Атăл ирхине» - танлаштару;*

*«Ĕçри ĕçчен пек Атăл кăнтăрла» - танлаштару;*

*«Пуса каччи пек Атăл каçхине» - танлаштару;*

*«Çулри юлташ пек Атăл сĕм çĕрле» - танлаштару;*

*«Çил лăпкать» - олицетворени;*

*«Тутлăн анаслать» -олицетворени;*

*«Мухтавлă тинĕс» - эпитет;*

*«Çут уйăх» - эпитет;*

*«Мăн тинĕс» - эпитет.*

***10.Кластер туса пĕтĕмлетни:***




***11. Килти ĕç:*** *1) Учебникри 5-мĕш ĕç.*

*2) «Атăл юрри» сăвва пăхмасăр калама вĕренесси.*